К-53

„Канаш" хаҫат ҫумӗнҫе тухат̆.

# КАПКӐН

7-мӗш
3 №

Февраљшӗн, 1927 ҫ. 2-мӗш ҫул тухат̆.

## План йӗрӗпе.

Хӑш-хӑш уҫрештенисем малтан туса хунӑ ӗҫ планне ӗҫе кӗртсе ҫитерейменҫӗ. (Хаҫатсенҫен).



**ҪЫННИ: План йӗрки... План йӗрӗ теҫҫӗ. Ӑҫтан кайса пырӑн вӑл план йӗрӗпе. Пит кукӑр-макӑр кайса пырат̆ мур, лаша йӗрӗпе каймалла пулсан кайма йӑвӑрах мар пулӗ те...**

# Шупашкартан хӑйамата.

Йалти ҫынсем пӗ‍ › пӗр ӗҫпе ӑҫта каймаллине пӗлмесӗр Шупашкара ҫӳресе нумай вӑхӑт иртереҫҫӗ. Йалко›

— Хӑҫан кайан есӗ, тур таташшӗ, хулана? Ҫынсем пӗр кун та килте лармаҫҫӗ, кашни кун пасара та пулин кайса килсе, пурӑнмаллӑх укҫа тупаҫҫӗ. Авӑ! Мӗтрисен Йӑванӗ ӗнер Йетӗрнене кайса ҫур пураллӑх йӑвӑҫ кӑларса килнӗ, тет. Есӗ пур, салтак вуттине халиҭҭен илейместӗн.

Иртен варах ҫапла йатлаҫаҫ упӑшкине Урине инке.

— Кайасси каймалла та-ха... Кайас пулсан Йетӗрнене мӗне ҫӳремелли ҫук, Шупашкарнех кайас пулаҫ те ҫавӑнпа ниҫтан та тапранса тухса кайаймарӑмха, терӗ Лукка пиҭҭе сивӗнсе кайнӑ кӑмака ҫинҭен аннӑ ҭух.

— Вутӑ тепӗр ернеллӗх те йулмарӗ... шӑнса вилетпӗр килте ларнӑ ҫӗртех. маншӑн пулсан ҫӑва патне кай, анҭах вутӑ тупса кил, тесе пӗҫертет Урине инке.

Тепӗр кунне ирех Лукка Петӗрӗ пештере ҫур ҫӑкӑр, тепӗр ҭӑкӑт ҭикрӗ те, ҫӳрен кӗсрине кӳлсе, Шупашкара тухса карӗ.

Шупашкара ҫитсе Михал Йӑванӗ патӗнҭе хваттер выртса тӑрсан Лукка Петӗрӗ ирех хулана тухса «Сопес» шырама тапратаҫ.

Пӗр портфӗлпе пыракан ҫынна хӑваласа ҫитсе:

— Хӑш урамра ҫав Сопес, тесе ыйтаҫ.

— Мало-Советскайа улитсӑра, тесе портфӗллӗ ҫын тепӗр урамалла ҫавӑрӑнса кайаҫ.

— Сирӗн Мало-Советски таврашне пӗлейместӗп-ха епӗ, тавай ҫав ҫамрӑк аҭа луҭҭӑ пӗлет пулӗ, тесе шутласа ҫамрӑк аҭаран ыйтаҫ.

— Канашски урамра!

– Мӗнле кунта икӗ Сопеси мӗн-ҭир. Парӗшнӗ, скаши пошалӑстӑ —кте Сопес?—тесе вырӑсла ыйтса пӑхаҫ тепӗр хӗраҭаран.

— На Сопорной коре.

— Ак тамаша иккӗ мар виҫҫӗ те пур курӑнаҫ. Ку маншӑн лайӑх йапала—виҫҫӗшӗнҭен пӗринҭе те пулсан ӗҫ тухӗ.

— Сопорни корана улӑхсан нумай шырамасӑрах пӗрремӗш Сопесӗ тупӑнҭӗ.

Алӑкрап кӗрсенех хӑйӗн пек ӗҫпе килнӗ ҫынсене тӗл пулҭӗ. Шалти пӳлӗмӗнҭен йӗрнӗ сасӑ илтӗнет:—Пур пускилсем кулаҫҫӗ... Ҫынсене пӗрер ҭалӑш укҫасӑр панӑ, мана ҫур ҭалӑша укҫалла параттӑр... Ман упӑшка партти ҭленӗ пулнӑ, аҭасем ывӑлӗ-хӗрӗпех Хӗрлӗ ҫарта темиҫешер ҫул пурӑннӑ... Епӗ хам та Паратски савӑтра револҭутси ҭух хӗрлӗ салтак шутӗнҭе ӗҫленӗ.

Хӗрарӑм шулланнӑ куҫӗсене шӑлса тухса кайсан Лукка пиҭҭе пуҫлӗх натне кӗрсе тӑҭӗ те калаҫ:

— Вӑт, йулташ кӑмиссар, манӑн ывӑл салтакра пурӑнаҫ, кӑҫал мана темшӗн йалсовет вутӑ кӑларса памарӗ.

---

## Ленкнӗ ҫын.



Йӗлӗк претҫетаттӗл пулнӑ ҫын суйлав пуххинҭен киле таврӑннӑ та, арӑмӗ ыйтаҫ унтан:

— Ленкрӗни?

— Ленкрӗм, тет.

— Претҫетаттӗле, йе ҭлена ленкрӗн?

— Ҫук. Халӑх укҫине салатнӑшӑн сута ленктерҭӗҫ, тет пуҫне хыҫса.

УРХАМАХ.

— Вулӑсра йе уйесра пултӑн-и?— тесе ыйтаҫ пуҫлӑх унтан.
— Вӗсене кайсан та тулкӑ ҫук тесҫӗ те, кайман.
— Унта кайас пулаҫ, пирӗн кунтан тӳрех пама йурамасҫ, ҫитменне тата мӗн пур вуттине такҫанах валеҫсе пӗтернӗ, тесе ӑнлантараҫ пуҫлӑх.
— Ырӑ ҫыннӑм! Туса пар ӗнтӗ кунтах, мана ватӑ ҫынна вулӑссене ҫӳреме хӗннине хӑвӑрах пӗлеттӗр.
— Ҫук, кунтан параймастпӑр. Пуҫлӑх Лукка пиҭҭен кӑсйере йӑванса хуралса пӗтнӗ хуҭӗ кӗтессине ҫыраҫ: «В такой то Волком Взаимопощи».
Лукка пиҭҭе ресоҭутсиллӗ хута ҭиксе тухаҫ те иккӗмӗш Сопеса шырама пуҫлаҫ.
Анҭах пӗр ҫыппа калаҫсан Шупашкар урамӗсем виҫшер йатлине ӑнланаҫ те, тарӑхса хваттере кайаҫ. Хваттерте хӑйсем патӗнҭи йалсене тӗл пулаҫ.
— Антон Иӑванҭ, есӗ те кунта тем. мӗн ӗҫпе тата килтӗн-ха Шупашкара?
— Ним ӗҫпех те мар таха. Ҫӗр пирки килсе пӑхас терӗмӗр. Кӑҫал мана тум вырӑнӗ ҫителӗклӗ памарӗҫ.
— Мӗнле, тухрӗ-и ӗҫ?
— Вулӑса кайма хушрӗҫ.
— Ҫапла ӗнтӗ мана та вулӑса йаҭӗҫ.
— Ех, мӑнтарӑн пурнӑҫӗ! Пайан кунӗпе ҭерет кӗтсе ларса вӑхӑт иртрӗ, ӗҫӗ ним те тухмарӗ, айта, хӑта, хуйхӑ пусарма пивнойа кӗрсе тухар.
Пивнойра йулашки укҫине хӑварса Лукка пиҭҭе киле ним тӑвасмасӑрах тавӑрӑнҭӗ.
— Ӑнланмалла мар, тет.—Мӗн май пур,—вӑл—ҫур ҭалӑш вутӑшӑн килтен Шупашкара, Шупашкартан вулӑса. вулӑсран уйеса, уйесран каллех Шупашкара ҫӳреттерни! Йӗркине пӗлсе ситерейместпӗр ҫав. Тӗттӗм халӑх.

П. ВАҪҪИЛЙӖВ.

---

## Тӗмер вулӗҫтӑвкомӗнҭе.

**Теловот:** Ҫакӑнта алӑ пусса пар-ха...
**Кулҭппӗн** (ВӖК ҭленӗ): Мӗн кансӗрлесе ҫӳретӗн, пӗрре шартлаттарса йарсан...
**«Капкӑн»** (кӑмака хыҫӗнҭен тухса): пӗре «Капкӑна» шарлаттарса лартсан!..

## Хур урипе салма...

— Ай-йай, хур ури тутлӑ. Нимӗн ҭӑмламасӑрах анса кайаҫ. Ӗмсе кӑна тӑр!..
— Йепле апла, Ҭамаҭ пиҭҭе! Шӑмми ҫук-и мӗн унӑн?
— Шӑмми ҫук, **тет** ҫав.
— Апла есӗ хӑв ҫисе курман-им?
— Ҫук. Манӑн асатте улпут тарҫи ҫапла каланине илтнӗ **тет.** Улпут тарҫи улпуҭӗ ҫинине курнӑ **тет.** Вӑл вара ытти ҫынсене каланӑ **тет.** Ҫак каланине вара манӑн асатте илтнӗ **тет**...
Ҫакӑн пек калаҫӑссӗ вара «тет» йумах ҫинҭен ҭӑваш йалӗсенҭе.
Ҭӑнах пулнӑ-ши ҫакӑн пек каланӑ ҫын, йе пулман-и, ӑна епӗр пӗлейместпӗр. Анҭах ҫак йышши ҫынсем пирӗн хушӑра халӗ те пур. Вӗсем йалта ӗҫ ҫук ҭухне култармалла кӑна каласан татах та пыраҫҭӗ-ха. Ун ҫумӗнҭе пӑсӑккийех ҫук.
Анҭах ҫак «тетлӗ» ҫынсем пирӗн хаҫат ҫине ҫыракан йалти кореспонтентсем хушшинҭе те пур. Акӑ вӗсенҭен пӗри ретаксине йепле ҫыраҫ:
«Епӗ, Салма Хӗветӗрӗ, ҫыру ҫине ак ҫапла йапала ҫинҭен ҫырнӑҭӗ: 3 пусӑран—4 пусса куҫрӗҫ тенеҭӗ. Вӑл тӗрӗс пулман, пирӗн йалсем куҫайман **тет**-ха, куҫма соклаҫ пулнӑ та халех мар **тет.** 1930—32 ҫулта тин куҫмалла **тет.** *).

Ф. Салмин.

Акӑ ӗнтӗ, пыр та калаҫ Салма Хӗветӗрӗпе! Хӑшне ӗненмелле? «Пирӗн йалсем куҫайман **тет-ха**... Халех мар **тет.** 1930–32 ҫулта тин куҫмалла **тет**». Пӗр 10 сӑмахра 3 «тет».
Йепле ӑспа ҫырнӑ-ши **«тетха»** Салма Хӗветӗрӗ малтанхи ҫыруне? Йепле пуҫпа ҫырнӑ **«тетха»** вӑл йулашки салма ҫырӑне?
Ку вара ҭӑнахах та, хур урипе салма йашки пулаҫ **«тетха»**.

Кури ТИТТОВ.

---

*) Ку ҫырува Салмин „Ҭӑваш Хресҭен" ретаксине йанӑ.

# Хӗллехи ҫанталӑк.

**(Иалти карттин).**



Хӗлле пулӗ. Ҫанталӑк суйлав правине ҫухатнӑ крштантан та сивӗрех. Ҫӗтӗк сӑкманпа инҫе кайаймӑн, сив ӑӡнсем кулак пек намӑслантараҫҫӗ. Питӗрсем хӗрелеҫҫӗ. Сӑмсаран ҫыртаҫҫӗ, хӑлхаран туртаҫҫӗ. Ӡисти мӑшкӑл! Ӗнер ӡарусӑр хуликанлах аташрӗ ҫилтӑман. Пайан уйар. Хӗвел хӗрлӗ хӑмаӡ. Ӡухӑнсем майлӑх хӗрлӗ ҫаврашка. Ӡухӑн Уҫӑпсене, Хыткан Хветкесене аппӑтасшӑн тӑрӑшаҭ, анӡах тем пирки, йалӑн шефӗ пек, кӑшт курӑнаҭ те, пытанаҭ лараҭ. Сивӗ, тӑрӑ сывлӑшра ҫуна сасси мӗкӗрет, нӑтӑр-нӑтӑр тутараҭ.

Йӑваҫсем сӑра кӑпӑкӗ пек шап шурӑ. Полттинӗк тӗслӗ. Рифмӑ шыракан сӑвӑҫӑ пек шухӑша кайнӑ. Ватӑ йӑмри шӑрт-шарт тӑваҭ, капкӑн пек, ҫамрӑк йӑмри ӡӗриклетет. Ӑшӑ пӳртрен мӑрйе витӗр тӗтӗм тухаҭ капланса, те ҫӑкӑр пӗҫереҫҫӗ, те сӑмакун вӗретеҫҫӗ. Таҫта инҫетре йӑтӑ вӗрет, те урса кайнӑ, мур, те ахаӡ, сивӗрен вӗрет.

Ав, писмонотсӑ пыраҭ—кивӗ тӑвӑр кӗрӗкпе, пысӑк алса тулӗпе. Сӑмси нӑш-нӑш тӑваҭ. Хутаҫҫи пысӑк. Те «Капкӑн» килет-ха ӗнтӗ, те «Канаш» анӡах. Пуҫӗ тӗлӗнӡен мӑкӑрланса пӑс тухаҭ, тӗтӗм пек. Страхховаҭ тунӑ лашипе кайаҭ Упрам вӑрмана вутӑ вӑрлама. Ҫӗлӗкне пуснӑ. Ҫӗлӗкӗ ҫунмасҭ,—вӑрласан тен ҫунӗ те-ха. Ӡӗлӗмне хыпнӑ. Йалӑн вӗҫӗнӡе кӗвентепе шыв йӑтма кайакан хӗр-упраҫ тӗл пулӗ. Пуш витресемпе. Упрам пухури пек лӑӡ сурӗ те, вӗҫтерӗ кайалла, килнелле—пуҫланӑ ҫӑпатине тума. Ҫӑл кутӗнӡе хӗрпе каӡӡӑ калаҫаҫҫӗ—алимент пуласси ҫинӡен пулмалла. Сивӗ ҫанталӑк ҫырма урлӑ кӗпер хывнӑ пӑртан. Йалсовет тӑвайманнине хӗл турӗ. Сарлака. Ун пек ҫирӗп кӗпере технӗксем те тӑвайрас ҫук. Тупата!

Сӗм вӑрман шап шурӑ. Шап шурӑ та шур хут пек. Шап шурӑскер шухӑша кайнӑ. Пуҫлӑха сивӗ сӑмах каланӑ сторӑш пек пуҫне уснӑ. Инвалиӡӗсем те пур йӑваҫсем хушшинӡе, анӡах Сопес вӗсене пулӑшу памасҭ. Хӑшӗ ҫитӗнсен-ҫитӗнсен иккӗленсе кайнӑ, тӗн ҫинӡен иккеленсе кайнӑ ҫын пек. Хӑшӗ тайӑлнӑ... Йут патшалӑха тарнӑ шурквартейтсӑ пек, упа выртаҭ шӑтӑкӗнӡе уҫ тупанне ӗмсе. Уҫ тупанне ӗмсех тӑранаҭ вӑл. Выҫахнӑ тукмак (кашкӑр) йалалла шыраҭ, йал пӑрушне тытасшӑн, йалкора маттериал тупса парасшӑн—ҫырма. Ӑсансем ӡӑтлӑхран тухмаҫҫӗ, таркӑн пулса ҫӳрекен пантит пек пытанса ҫӳреҫҫӗ.

Шурӑ пӳрте кӗрӗттӗм те,
Ура салтса ҫӳрӗттӗм.
Кӑмака ҫумне ларӑттӑм та.
Сар ҫу пекех ирлӗттӗм...

МАМИ.

## Урамра илтнисенӡен.

— Ну, йулташ, ес копператтива мӗнле пулӑшатӑн?

— Ей, ес манпа ан калаҫ!.. Хыт пулӑшатӑп. Кашни кунах тепешкел полтушинӑ литр илетӗп...

* * *

— Ес Анисҫӑв тухтӑр пурнӑҫпа вилӗм ҫинӡен лекси вуланӑ ҫӗрте пулнӑ-и?

— Ҫук, пулман. Ман вилес те килмест, пурнас та килмест. Микиш.

# Ђăваш çĕршывĕн Тĕп „Капкăн“ комиççинђе.

## Февралĕн 12-мĕшĕнђе пăхса тухнă ĕççем.

### Мĕнле ĕç пăхса тухнă?

1. Ђуман-касси (Турай вул.) шкулĕнђи кăмака мăрйине (трупине) тĕтĕм кăларнăшăн айăплани.

2. Тутаркас вуласĕнђи вуламалли çурт пуçлахĕ Скворцов ђăвашла калаçма ўркенни.

3. Кармал йалĕнђи Михала пуп ывăлĕ, хăй комсомолĕс мар пулсан та, комсомолĕс, тесе çўрени.

4. Çĕнĕ-Катек йалĕнђи (Çĕрпў вул.) усламçă Петр Романăв, суйлав кампанни çите пуçласан, сутă тума пăрахни.

5. Кўрекаç йалĕнђи (Тутаркас вул.) Луккин Макçăм Петровиђ хăйĕн пĕтĕм кил-çуртне, уйри анисене, тумтирĕсене сутса ĕççе, шушкă çисе пĕтерни.

6. Мулкађă йепле йăтăран хăраť, çавăн пекех Шăмат акрономĕ Прашкулĕнђи йалхуçайстви крушокне пырса токлат туса парасран хăрани.

7. Нăрвашра (Тăвай в.) Йехрем Микулине Ваçли Хветăрăв йатлă хулигансем Кукамай патĕнђе ларакан хĕрсен турахупĕсене, тата пўртри лампа çапса çĕмĕрни.

8. Иртемен-кассинђи (Уравăш вул.) хресђенсем хушшинђе пыллă кăвас тăвас ĕç сарăлса пыни.

9. Патарйел вуласĕнђи Сăкăтра Петр Йăванђђă йатлă усламçă краççина литтăрпа виçес вырăнне, кивĕ крушкăпа виçни.

10. Улăх-Шамат кĕперĕн шалăни (Улăх-Шăматри çĕр уполномођăнсем Шăмата çĕр пуххине кайсан пĕр кивĕ кĕпер парăсне сутса ĕçсе йанă).

### Мĕнле решшени йышăннă?

Вăл кăмака «Капкăн» умне пирвайхи хут тăрса айăпланнине аса илсе, кăмакана айăпран хăтарас. Ун вырăнне ђуманланса кайнă Ђуман йалсоветĕпе Турай вулĕçтăвкомне «Капкăнăн» 999-мĕш статйипе айăпласа, çав кăмакана йусама хушас.

Скворцовăн найап (кахал) ђĕлхине кăларса илес, ун вырăнне çĕнĕ ђĕлхе лартса парас. Лартма Политпроçвета хушас.

Ађи ђипер те, сăмси пыђђăклă. Пыђђăкне типĕтме «Капкăн» лаççинђе типĕтсе пăхас.

Суй, суй, суйеççĕ! Суйсассăн та суйлава лекеймĕн. Суйлав комиççине çав Петĕре суйласа уйăрса хума хушас.

Луккин Макçăма Ĕçкĕ Макçăмĕ, тесе йат парас. Çĕнĕ йатне САКС урлă çирĕплетес.

Шăмат акрономне пĕр-пĕр шăмат кун уйеçри çĕр управленийе ђĕнтерес Ытлашши хăравçă пулсан, ухутниксен сойусне кĕртес.

«Капкăнăн» 222-мĕш статйи тăрăх лампăсăр çурта йарас.

Пыллă кăвас проиçвотствине саракан хресђенсене кăвас ђĕрес ă ш н е лартса Шупашкара илсе килтерес. Илсе килсен вĕсене «Капкăн» лаççине хупас.

П. Йăванђђа „Капкăн“ виçипе виççе пăхас. Ытлашши йăвăр туртсан, ырханланмалли емел парас.

Çĕр уполномођĕнђе çўресе ватăлма пуçланă çынсене туйă тупса парас (ватă çынна туйă кирлĕ, теççĕ). Туйапа килĕшмесен, «Капкăнăн» туй хуранне кĕртсе ăшăтас.

**Тĕп „Капкăн“ комиççин çекреттарĕ:**



# Йулташне пулăшни.

Хĕрупраç, каҫҫăпа вăрттăн пурăнса, аҫа тупаť. Каҫҫи ăна сиссен, хăйне мрĕксĕр авлантарса йарасран хăраса, кутăна туртаť... Аҫа амăшĕ те хăйне каҫҫи илментен, ҫиленсе, аҫине пĕвве ўссе ҫитĕниҫҫен ашшĕ тăрантарса пурăнтăр, тесе ҫак каҫҫа сута параť.

Сута ҫĕнтерсен, аҫанăн ашшĕ ҫасах хăйĕн йулташĕсемпе, тăват-пилĕк тантăшĕпе сăмах пĕтерет:—«Мана сута паҫĕç. Сутра манран: —есĕ унпа пурăнтăн-и? тесе ыйтсан:—унпа пĕр епĕ кăна мар, ытти каҫҫăсем те пурăнҫĕç, тесе каласа парăп.—Камсем, камсем? тесе ыйтсан. епĕ сирĕн ҫине кăтартăп. Есĕр те вара ҫапла: пĕр епĕ кăна мар, унпа ыттисем те пурăнҫĕç», тесе пĕрпĕрин ҫине кăтартăр. Епĕр ерттелпе ҫапла кăтартсан, унăн аҫине мана тăрантарма хушас ҫук, тет. Йулташĕсем те унăн сăмахне итлесе, ăна пулăшма пулаççĕ, йепле калама хушнă, ҫапла каласа ăна ҫăлма пулаççĕ.

Сутра аҫа ашшĕнҫен:

— Ҫав хĕр санпа пурăнса аҫа тупрăм, тет.—Мĕн калăн ес ун ҫинҫен. тесе ыйтса пĕлесçĕ.

— Пурăнсаттăм, тет тўррине.—Анҫах унпа пĕр епĕ кăна мар, ытти каҫҫăсем те пурăннă, тет ку.

— Камсем пурăнсаҫҫĕç? Йаҫĕсене, хушамаҫĕсене пĕлетни? тесе ыйтаççĕ.

Ку та:

— Пĕлетеп, тет.

Ку тытăнаť йĕркерен ҫавă, ҫавă, тесе, йаҫĕсене, хушамаҫĕсене каласа параť. Суҫĕ каланине ҫырса пыраť. Вĕсене те сута ҫĕнтерсен, суҫĕ малтан: сут сиртен мĕн ыйтнине есĕр тўррипе, тĕрĕссипе каласа пама тивĕçлĕ. Тўррипе каласа памасан, суйа суйнашăн, хăвăрах айăплă пулăр, тет те тытăнаť тĕпҫеме.

Пĕри калаť;—пурăнтăм, тет. Анҫах унпа пĕр епĕ кăна мар, ыттисем те пурăнҫĕç,. тет.

— Камсем пурăнҫĕç? тесен,ҫав ҫырса илнĕ йулташĕсен йĕҫĕсене, хушамаҫĕсене каласа параť. Тепĕрĕнҫен ыйтсан, вăл та ҫапла каласа параť. Виççĕмĕшĕнҫен те, тăваттăмĕшĕнҫен те, пиллĕкĕмĕшĕнҫен те ыйтсан, пурте ҫапла кĕсем пĕр пек каласа параççĕ:

— Пурăнтăмăр, пĕр епĕ кăна мар, унпа ыттисем те пурăнҫĕç, теççĕ.

Вĕсем мĕн-мĕн каланине суҫĕ хут ҫине ҫырса илсен, тепĕр пўлĕмне кĕрсе кайса, аҫанăн ашшĕ айăпли, айăплă мар-и ҫинҫен канаш тăваť. прикăвăрне ҫыраť.

Ҫав вăхăтра кĕсем, кунта тăрса йултисем, хăйсем ашăнҫе: пурсăмăр та пĕр пек, лайăх каларăмăр, йулташа хăтартăмăр пулас, урăх нимĕн те пулмĕ, ҫуратнă аҫине амăшĕ хăй тăрантарса пурăнтăр тесе, пĕр-пĕрин ҫине пăхса, кулкаласа тăраççĕ...

Аҫанăн ашшĕ те унăн йулташĕсем те:—епĕр унăн амăшĕпе пурăнтăмăр, тенĕрен, сут пурне те аҫине пĕвве ўссе ҫитиҫҫен тăрантарса пурăнмаллăх, кашниҫен уйăхне пилĕкшер тенкĕ илсе тăмалла тăваť те, каллех сут тăвакан пўлĕмне кĕрсе, сут мĕскерле сутит тунине вуласа параť.—«Хĕраҫанăн аҫине пĕвве ўссе ҫитĕниҫҫен тăрантарса тăма, унăн амăшĕпе пурăнтăмăр тенĕ ҫынсене: ҫавна, ҫавна, тесе, пурне те йаҫĕсене асăнса, кашнине уйăхне пилĕкшер тенкĕ тўлесе тăма турĕ», тесе, вуласа кăтартаť.

Ҫапла ҫăлҫĕç ĕнтĕ ҫав аҫасем хăйсен йулташне.

ИВ. ЙУРККИН.

# Штат.

Антрарăм ĕнтĕ ку ҫакайĕнҫен
Шапа тасатса;
Пĕр ларса канмасăр кунĕн-ҫĕрĕн
Витрепе тăкса.
Пайан ир ҫинҫе пилĕк ҫĕр тăксан—
Каçпа ултă ҫĕр;
Каçпа канмасăр ҫиҫĕ ҫĕр тăксан—
Ирпе тăхăр ҫĕр.
Ҫўлтен тăкатăп, айалтан кĕреççĕ
Ах, шуйттансем!
Мĕн пур улмана ишеççĕ—ҫийеççĕ
Путсĕр хырăмсем!
Ийие пуçĕсем, улма мурăсем,
Ҫасрах тасалăр!
Ктем ҫĕрине, ун вăйне-халне
Урăх ан кăшлăр!

* * *

Штат
йуççех тăраť.
Штат
ўссех пыраť.

Ç. ШАНҪАК.

# Тӗлӗнмелле йапала.




— Итлӗрха, йулташсем, есӗр „Том Совтепа" ҫурҭӗ тӑррин҆е хӗрес ларнине курни?

— Курнӑ.

— Ӑҫта?

— Шупашкар хулин҆е, Патшалӑх панккипе йунашар, Решшеттин пулӑҭнайне хирӗҫ, тӳррипе каласан, „Том Совтепа № 51" йатлӑ ҫуртра.

ИРҪЕ.

## Ҭӑваш ваттисем калани тӗрӗс мар.

(Улпутла ҫыннӑн шухӑшӗ).

1. Ҫӑкӑр-тӑвар хире-хирӗҫ тенӗ вырӑнне, хутпа-хут хире-хирӗҫ, темелле пулаӗ.

2. Малтан шухӑшламасӑр пӗлмен ӗҫе ан ту тени маншӑн мар. Пӗлмен ӗҫпе еп ҫыхланмастӑп,—ман ӗҫӗ те ал пусса ларасси ҫеҫ. Ал пусма епӗ пултаратӑп, ӑна шухӑшламасӑрах тума пулаӗ.

3. Емӗрте катӑк пуртӑ та кирлӗ пулнӑ, теҫҫӗ. Мӗн тӑвасха манӑн пуртӑпа? Руҭкӑпа перо пулсан ҫитет.

4. Авалхи ҫынсем: йаланах ҫӑварни мар, типӗ те килет, тенӗ. Ку пословитсӑ халӗ йурӑхсӑра тухнӑ, мӗншӗн тесен епӗр турра ӗненместпӗр. Маншӑн кирек-хӑҫан та ҫӑварни.

5. Йаланах ҫуллӑ пӑтӑ ҫимелле мар, тени тӗрӗс вара. Пӑтӑ йӑлӑхтараӗ, хӑш ҭухне котлеткӑсемпе кӑлпассисем те ҫимелле пулаӗ. Хыт ҫӑкӑр кышласси вара пиртен пулас ҫук. Вӑл кӗҫӗн служащиҭисен ӗҫӗ.

6. Ҫула ҫӳрес пулсассӑн, хӑвӑнтан вунӑ хут лайӑхрах йулташ тупса кай, тенӗ ваттисем. Ман шутпа апла мар: вунӑ хут лайӑхррх йулташ вырӑнне, вунӑ хут нумайрах укҫа ҭиксе каймалла (уҭрештени укҫине).

7. Йулхавӑн турри ҫывӑхра, теҫҫӗ. Епӗ йулхав та, анҭах хам ҫывӑхра турӑ пуррине кураймарӑм. Ҫук турра ӑҫтан курӑн ӗнтӗ.

8. Алӑк патӗн҆е вырӑн пур ҭухне тӗпеле кайса лармаҫҫӗ, тенӗ. Мӗнле лармаҫҫӗ? Епӗ алӑк патӗн҆е вырӑн пур ҫин҆ех тӗпеле—кӑпинета кӗрсе лартӑм.

Ил—в.

### Пуху хыҫҫӑн.

— Ӑҫта карӑн ес, Михала?

— Суйлав пуххине карӑм.

— Пуху вӑйлӑ пуҭҭи?

— Кӗрешсе пӑхмарӑм. Кӗрешсен те ҫийелле тухас ҫук та.

# Кӗнђӗлерти выљӑхсем.



## Сивӗ йун.



Пулӑн йунӗ сивӗ йун. Ҫав тери сивӗ пулсан та вӑл Хура-касси (Шурђа вул.) пасарӗнђи йӗркесӗрлӗхсене тӳсес ҫук. Вӗри йунлӑ ђун пушшех тӳсеймӗ. Копператтивсем ҫапах тӳсеҫҫӗ (йеванкӗли ҫинђе: спре хӗсӗрлесеп есӗр телейлӗ пулӑр, тенине илтнӗ пуљ). Пасар хуҫисем пур унта. Ҫав хуҫасем копператтивсенђен ерешментен йӗрӗннӗ пекех йӗрӗнеҫҫӗ. Йӗрӗнеҫҫӗ пулсан та, вырӑн укҫи вӗсенђен ђаҫтниксенђен илнӗ пек мар, нумайрах илеҫҫӗ. Аптрамалла, кулмалла, тенӗ, тет ӗлӗк пӗри. Аптрамалла мар, астумалла... Шурђа вулӗҫтӑвкомӗн астумалла. Астумасан, есӗр пасар хуҫисемпе кумалла, тейӗпӗр.

## Сысна.



Ҫак—сысна вӑл. Сыснаран сурӑх пулмасӗ, теҫҫӗ. Ђӑн вӑл. Тем ђул хӗнесен те пулас ҫук. Ак илӗпӗр Кавал пасарӗнђи усламҫӑ, Ҫтаппан Матвейђа. Вӑл суйлав тивӗҫлӗхӗнђен кӑлароа ывӑтасран хӑраса, суту-илӳ паттентне хӑй патӗнђе пурнакан патрак йађӗпе илнӗ. Сыснаран сурӑх пуласшӑн пулнӑ, анђах тем ђухлӗ тӑрӑшсан та шӑртне сурӑх ҫӑмӗпе улаштарайман, хӑй пӗкӗрҫне ҫухатайман. Тӗнђе сакунне хирӗҫ пымалли ҫук ҫав. Ҫапла пуљ суйлав тивӗҫлӗхпе ҫухатман крапгӑнсем? Н—та!

## Аван хваттер.



Ҫак клеткӑ ӑшне кӳртсе лартма ыйтаҫҫӗ Иккӗмӗш Хуршевашри (Аттай вул.) Макуҫ Павӑлӗпе Михал Йӑванђђа Кӑмаша вӑрманӗнђи икӗ хуралҫа. Хуралҫисенђен пӗри—1-мӗш опхотри Арҫенкин Ваҫҫили, тепри 2-мӗш опхотри Миххейӗв Алексей. Ӳсӗр ҫынна тинӗс те лађаканӑн туйӑнпӑ, теҫҫӗ те, ҫав хуралҫӑсен ӳсӗр куҫне те ликпункт ваљђи вутӑ турттаракансем вӑррӑн туйӑннӑ. Макуҫ Павӑлӗпе Михал Йӑванђђа вӗсем пӑшалпа ҫапса ӳкерсе наканпа шутсӑр хытӑ ватнӑ (хӗнекӗ). Ҫав клеткка хупмасӑр йусанаймаҫҫӗ ӗнтӗ вӗсем. Вӑрман хуралҫисем клеткка ҫӗмӗрсе тухасрӑн тепӗр хуралҫӑ тытмалла. Ах, ку шӑпӑрлансемпе!

## Йăтă кулли.



Йăтă кулли, теççĕ ҫăвашсем. Йăтă кулаŧ-ши вара? Шупашкарти пахҫаçимĕçне вĕрентекен шкула кĕрсе пăхсан, йăтă мар, тĕве те кулса йарĕ. Сыснисем кухҫăра пурăнаççĕ. Кухҫă çенĕкне кĕрсенех сысна тислĕкĕ ҫăркуççи таранах выртаŧ, шăршламалла мар сăмсана шăршă перет. Кухҫăра етемсем мар, сыснасем пурăнаççĕ, темелле. Ҫăнах та, сыснасемех пурăнаççĕ çав унта—тăвăт ураллисем, ик ураллисем. Смыҫкă тунă вĕсем пĕр-пĕринпе. Фонвиçин пйессинҫи Скоттинин пек сыснана йуратаççĕ иккен унти пуçлăхсем. Сыснапа пĕр йăхран марши вĕсем. А? Мĕнле пек?

## „Хастар" йалсовет ҫленĕ.

Халĕ пур çĕрте те промышлĕнначçа хăпартасси çинҫен калаçаççĕ. Ун çинҫен Аркасси (Йăлăмкас вул.) йалсовет ҫленĕ, Мирун Хветĕри те, хытă шухăшланă. Шухăшланă—тунă. Аркасси йалĕ халăхĕн пĕр тимрĕç лаççи пур, çак çулта вăл ĕçлемесĕр ларнă. Тытăннă çак Мирун Хветри çак претприйаттнийе хăпартма. Малтан алăкне хăпартса кайаŧ, унтан лаç тăррине, кайран сунтал тупкаŧне хăпартса кайрĕ. Халĕ ĕнтĕ лаçса ĕçлеме тимрĕçи те килҫĕ, анҫах тимĕрçи тăрсăр лаçран çулелле «хăпарса» улăхса кайасран хăрамалла. Çавăнпа та йал халăхĕ Хветĕре сута памалла турĕ.

ИТЛЕКЕН.

**Капкăнран:** Аван, аван. Мирун Хветрине хăйне хăпартса йарсан аван.

Л.

## Сехмет.

— Туй...—
Инкек-синкек,
Сехмет-тĕттĕм...
Ҫул мăклашки
Питрен... куçран...
Ай!.. А!.. Уй:..
Çăтти-çатти—
Кĕмсĕрт-кĕмсĕрт...
Питрен-куçран
Вут... Хĕм тухаŧ.
Ай!.. Кра-вул!..
Мунҫа вутти!
Хăлха-ҫикки—
Пĕр кĕтесрен,
Тепĕр йенне
Вăн!.. Вăн!.. Вăн!..
Хурахлатсан,
Хуран хăрăм...
Айуйлатсан—
Ланка айĕ..
Туй!.. Туй!.. Туй!...

---

Йункă хĕрĕн
Пиҫĕ йунлă...
Хветĕр аҫин—
Пуçĕ çурăк..
Микиш макраŧ
Хветли йĕрет...
Алли-ури
Сикнĕ вĕсен...
Ай!.. Ай!.. Ай:..

---

Шупашкарăн
Шурă çурҫĕ,
Сахар Куçми
Сехмет тăваŧ.
Пуççем çураŧ,
Ура хуçаŧ,
Хулла пăраŧ...
Вăл,.. ман... а!..

К. РУССАКОВ.

## Çĕнĕ майлă.

— Ех, çĕр нумайрах пулнă пулсан лайăх та

— Ма илместĕн? Параççĕ, вĕт.

— Илме йăвăр. Çемйе пит, пысăк манăн.

— Пысăк çемйеллĕ çынна çĕрне те нумайрах параççĕ. Ĕсĕ ăна пĕлмен мĕн?

— Çапăне çапла та, анҫах манăн пĕр çемйи хулара тепри йалта.

(Çăпата).

# Шалăпă кĕнеки çинҫи 56-мĕш номĕрлĕ хут.

56-мĕш №-лă хут пĕрре çеç мар. Çав шутах, шалăпă кĕнеки те республĕкре пĕрре çеç мар. Çавăнпа та ҫи малтан 56-мĕш №-лă хут ăçти вырăнта, хăш уйесра, тен вулăсра вырттнине пĕлме кирлĕ. Ку ҫи малтан. Унтан тата Кулакков краштанин ăçта пурăннине пĕлес пулаҫ. Çĕр çинҫе Кулакковсем, пуринҫен ытла кулаксем пĕрре çеç мар. Вĕсем пирĕн республĕкре те 3 проҫ. çитеççĕ. Кулакков тенĕрен Кулаккова краштанин темех те йураҫ, ăна йулташах темĕпĕр. Вăл Орински йалсоветҫĕн иртнĕ составĕнҫе претçетаттĕл пулнă. Çавăнпа та ун пек çынсене краштанин, тесе кӳрентерме те капçĕртерех. Анҫах мĕнле пулсан та вăл Хлепниккăв Арттеми (Хура-касси выççăлкки) çырса панă сайавленн çине „правильности настойащҫево сайавлени"... тесе ал пусса параҫ. Епĕр кунта Кулакковсемпе ҫарманса тăмăпăр, Хлепниккăв сайавленинех пăхса тухăпăр.

Хлепниккăв çыраҫ: „Шурҫа вулăс налок пайне" поççеҫоннăй çпискă тунă ҫухне епĕ хам килте пулман. Хам хĕраҫа Марфа çеç пулнă. Вăл арман мĕн ҫухлĕ тупăш панине пĕлме пултараймасҫ. Ман арман 300 тенкĕ мар, 200 тенкĕ çеç тупăш пама пултараҫ", тет.

Йураҫ. Пирĕншĕн пулсан, хуҫ те çĕр тенкĕ çеç тупăш патăр. Пирĕншĕн пулсан, çав шутах, Хлепниккăв хуҫ те сайавлени çине 4 арман ҫулĕ илтĕм, тесе мар, 10 арман ҫулĕ илтĕм, арман та çуртри çеç авăртаççĕ мар, хуҫ тула хуҫ майан, тесе макăрса çыртăр. Пирĕншĕн пулсан пурĕ пĕрех. Анҫах Хлепниккăв хăй арман 200 тенкĕ тупăш параҫ, тесе сайавлени çыраҫ.

Налок комиççин мĕн тесе 100 тенкĕ тупăш параҫ, тесе вăйпа Хлепниккăв тупăшне йӳнетмелле пулнă-ха? Çак ыйту вăра, пире тĕлĕнтерет. Налокпа Финанс Комиçийĕн 4-мĕш 31-мĕш проттоколĕ çинҫе çаплах çырнă. «Хлепниккăв тупăшне 300 тенкĕрен 100 тенкĕ ҫакарас, 65 тенкĕ таранҫҫен хунă налукран 20 тенкĕ хăварас», тесе çырнă.

Тĕлĕнмелле. Хлепниккăвĕ те тăрăшаҫ, Илйинсем (налок комиççисем) тата ытларах тăрăшаççĕ. Хлепниккăв ман арман 200 тенкĕ тупăш параҫ, тет. Илйинсем—налокпа финанс пайĕн хусисем, апла мар, суйан, теççĕ. Сан арман 200 тенкĕ мар, 100 тенкĕ çеç тупăш параҫ, теççĕ. [Те Илйинсем Хлепниккăва ҫухăн хресҫен шутне кĕртсе «хур» тăвасшăн те...

Мĕн «те» темелли пур унта. Ахалех курнаҫ вĕт. Иҫйин Хлепниккăвăн хуҫкасси пулаҫ. Хуҫкасси, хуҫăм, пуçана, кум, кĕрӳ, таврашĕсем хăйсен тăванĕсемшĕн пулсан, саккун кĕнекисене кутăн тытса вулама та хатĕр.

ПИНЕР.

## Волокиттăсăр уҫреш-тени

Мăн Йамашри (Аттай вул.) Михи Мишукпе пĕлтĕр Аслă Сут, комсомол йаҫейккин çекреттарне вĕлерншĕн, 5 çул ларалла турĕ, а ҫах Мишука кăшт ларсанах тĕрмерен кăларса йаҫĕç. Халĕ йăл каллех çĕçĕ семпе çӳрет.

(«Канаш» 26(1719)-мĕш №).



**Мишук Михи** (тĕрмене кайас умĕн). Сыв пул, арăм! Нумайах пурăнмăп. Ҫасах килĕп.

**Арăмĕ**: Ай-уй! Ăçтан ҫас килме пултарăн ĕс? 5 çуллăх хупмалла тунăçке сана.

**Мишук Михи**: Ан хăра? Тĕрмерен кăларассине кĕтесси, уҫрештевире ĕç туса парассине кĕтнийех мар. Унта волокиттă таврашĕ çук. Ыран пайанах килĕп. Сывă пул!

## Петак.

(Кооператтив лавккинҫе пулнӑ калаҫу).

— Халӗ таварсен хакне как нипуҫ ҫакармашкӑн тӑрӑшаҫҫӗ... есӗр пур питӗ хакла сутаттӑр. Ҫак ҫитсу меттӑрне пасарта 30 пус ҫеҫ ыйтаҫҫӗ, есӗр пур... аршӑнне 60 пуса сутаттӑр.

— Хакла сутмасан та май килмест ҫав пирӗн, кӗркунне сахӑр нумай ирӗлсе кайнӑ... петакне (пилӗк пусне) ҫавна ҫатмашкӑн хутӑмӑр.

— Пилӗк пус хушнӑ пулсан та, сирӗн 35 пуса ҫеҫ сутмалла, есӗр пур... 60 ҫатлатараттӑр?!

— Ара тата вир кӗрпине шӑшисем румай йухтарса кӑларнӑ, тепӗр 5 пусне куншӑн хунӑ.

— Капла пулсан та есӗр пасартинҫен 20 пуса ытлашши сутаттӑр-ҫке?

— Тата ӗнер тухнӑ претҫетатӗлӗн 100 тенкӗ укҫа тухманиннине тупнӑ, хӑй вӑл нимӗн сутса та тӳлеме пултараймасҫ... Куншӑн тата тепӗр петак хурас, терӗҫ.

— Тата виҫӗ петакне мӗншӗн ытлашши хутӑр?

— Ҫӗнӗрен кӗнӗ претҫетаттӗл пӗтермест тетӗни мӗн есӗ? Пӗтеретех, лешӗ тути-ҫути ҫӳрекелесех 100 тенкӗ пӗтернӗ.. Кунӑн халӗ хӗр парас пулаҫ, снаҫӑт 200 тенкӗ пӗтерессе кӗтсех тӑр... Икӗ петакне ҫавӑншӑн хурас теремӗр.

— Вҫо петак та петак, миҫе петак пуҫҫӗ сирӗн?! Пастай сахӑр ирӗлнӗшӗн пӗр петак; вир кӗрпишӗн тепӗр петак,—снаҫӑт икӗ петак пуҫҫӗ, тухнӑ претҫетатӗл пӗтернӗ укҫана саплашкӑн каллех тепӗр петак—виҫӗ петак пуҫҫӗ, хаҫ кӗнӗ претҫетаттӗл пӗтерессине шанса тепӗр икӗ петак; иккӗ те, паҫӑр-ха виҫҫӗ-ҫӗ пулас ха,— пиллӗк петак. Пиллӗк петак мӗн ҫул тӑраҫха, пастой кунта таплитсӑ пӗлме килӗ.., 5 хут пилӗк—25, лап 25 пус пулаҫ... Ҫапах есӗр тепӗр петака ытлашши хунӑ.

— Пуҫлӑхсем пӗтерсен пирӗн ахаҫ лармалла-и тата? Ну тепӗр петакӗ пирӗншӗн пултӑр, тата мӗн килӗ-ха сана...

— Ну, йурӗха.., есӗр 100 тенкӗшӗн петак хунӑ, сирӗн сахӑр неушели 100 тенкӗллӗх ирӗлсе кайнӑ вара?!

— Ҫӗр тенкӗллӗх пулмасӑр; ара шутлаха: сахӑрне пӑтне 10 тенкӗ парса илнӗ, пирӗн 7 пус ҫурӑ ирӗлсе кайнӑ.. вара вӑл 100 тенкӗллӗх пулмари-ха?!

— 7 хут 10... ҫитмӗл те, тата виҫҫӗ половинӑ... сирӗн сахӑр ҫитмӗл пилӗк тенкӗллӗх ҫеҫ ирӗлнӗ-ҫке!

— Ҫаххине ҫӑмарти вӗрентмест, маҫтӑр хӑй пӗлет.

— Ну йурӗ... Кӗрпе те 100 тенкӗллӗх йухса тухни?!

— Ҫӗрлӗх ҫав. Ӗненместӗн пулсан шутла: пӑтне тӑватӑ тенкӗ панӑ... пӑт ытлашшипех йухтарса кӑларнӑ, ҫӗр тенкӗллӗх пулмари-ха?!

— Ара, апла сирӗн пӗр пиллӗк тенкӗллӗх ҫеҫ йухнӑ пулаҫ-ҫке. Тата хаҫ кӗнӗ претҫетаттӗлӗ 200 тенкӗ пӗтермесен... ӑна есӗр мӗнле пӗтерет теме пултараттӑр? Аҫи ҫуралмасӑр кӗпине ан ҫӗле, теҫҫӗ вӗт...

— Ну, манӑн хырӑм выҫнӑ, айта тух-тух лапкаран. Марш! Ӗпӗ лапкана питӗретӗп.

## Пулӑҫӑ.



— Мӗн кушаккипе аппаланса ҫӳретӗн? Кушак тени ан пултӑр ман пӳртре. Илтрӗни?

— Пулӑ ҫийес килҫӗ. Пуйан ҫынӑн кушакки те пулӑ тытаҫ, теҫҫӗ. Пулӑ тыттӑр, тетӗп.

АВАНИҪ КУҪМИ.

## Ђӗрӗ ӗҫе вӗлерекен пыйтă.

Ку таранђђенех-ха пирӗн внҫӗ нуслăх ӗҫе 5—6 уйăх, хăш ђухне икшер ҫул та тăсса пыни пур. («Канаш» 36 №).



**Хресђен:** Мана килес ҫул кӗркунне вăрмана кăмпана кайма хут туса парăр-ха.

**Пуҫлăх:** Ма есӗ килес ҫулхи ӗҫшӗн халех аптратса ҫӳретӗн?

**Хресђен:** Сирӗн уђрештенире 3 пуслăх ӗҫех ҫур ҫул ытла тăсса пыраҫҫӗ. тенине илтнӗђђӗ те, сайавленнине халех парса хăварас, терӗм,—килес кӗркунне лапах туса пама ӗлкӗреттӗр.

## Сăмакунҫă Трихван

Хӗрлӗ Трихван ваҫкаса
Катка кутӗнђе калакпа
Пăтраткалаť, тăрмашаť
Ҫутти тума хатӗрлет.
Ун(ăн) арӗм Кăтра Маťťук
Ҫӗпре йараť каткишне
Пулăшкалас, тет, пăртак
Ђун патӗнђи йулташне.
Пăтăр-патăр шултра тар
Шăпăртатаť Трихванран
Хӗрлӗ ҫӳҫӗ тăршшăран
Лăстăк-лăстăк силленет...
* * *
Трихван пӗђӗк лаҫҫинђе
Майлаштарђӗ пăракне
Ђӗртсе йаđӗ вуттине
Кӗтсе лараť смаккунне.
Лăпăр-лăпăр пăраки
Лăпăртатаť пиђкере,
Пиҫсе ҫитнӗ сӗткенли,
Хăлутилнӗк пăсланђӗ.
Трихван вутне ђакарђӗ,
Ҫуттин шăрши сарăлђӗ.
Пăт-пăт! тӗр-тӗр! тӗр-р-р!..
Шӗпӗртетрӗ кленђишне.
Пӗр ђаранмасť, вăл йухаť
Хӗрлӗ Трихван кăмăлне.
Пăрҫаланаť кленђере.
Симӗс-квакăн кураňаť.
Смакун хайар пулмашкăн
Хлутилнике йур йараť.
Куҫа-пуҫа пымашкăн
Сăмакунне сыпкалаť.
Ех! сăмакун столовăй
Хресђен мулне пушатаť.
Савăтри те «хăлепнăй»
Шалу укҫи йуратаť.

КАРАТТАЙ ЙĂВАНӖ.



## Ёлӗкхипе хаљхи ҫитменлӗхсем.

Ёлӗк укҫашӑн кађакана кађђа илнӗ, халӗ укҫашӑн кооператтива кӗреҫҫӗ, никам та кађакана кађђа илес ҫук.

Ёлӗкхи ҫынсем авлансан, йе кађђа кайсан ҫеҫ тӳрленнӗ, хаљхисем арӑмӗ уйӑрлса кайсан тӳрленеҫҫӗ.

Ёлӗкхисем: хӗр пултӑр—кин ҫимӗш, тенӗ, хаљхисем: алимент ҫимӗш, пултӑр, теҫҫӗ.

Ёлӗкхисем анӑшне пӑхса кађђа илнӗ, хаљхисем (хуларисем) пиђӗ ҫинђи сӑрне пӑхса илеҫҫӗ.

Ёлӗкхи ҫынсем, арӑму хыҫҫӑн ан кай тенӗ те, хӑйсем арӑмӗсем хыҫҫӑнах кайса пынӑ, хаљхисем йут арӑмсем хыҫҫӑн кайаҫҫӗ.

Ёлӗк хӑй пуҫне улпута хуракана ухмах тесе ђӗннӗ, хаљхисем хӑш ђухне пуҫлӑх, тесе ђӗнеҫҫӗ.

Ёлӗк халӑх сурсанах кӳлӗ пулнӑ, халӗ мелиораттӑрсем пулсан та кӳлӗсем типе-типе лараҫҫӗ.

Ёлӗкхи ҫынсем: ҫын ҫӑварӗнђен тухмасан алӑкран тухмасҭ, тенӗ, хаљхисем

## ЛЕССАКРА.



**Слушӑшђи**: Хаҫан кӳрсе парӑр ҫак есӗр пире вутӑ? Пирвайхи ҫуна ҫулӗпех кӳрсе пама пулнӑђђӗҫке.

**Лессак**: Тата пӗрер-икшер уйӑх кӗтӗр-ха.., Пирвайхи урапа ҫулӗпе кӳрсе парӑпӑр-парӑпӑрах. Киревсӗр ан ӳпкелӗр!

—10—15 хут пырса аптратмасӑр та ӗҫӳ кӗнђелер алӑкӗнђен тухса кайаймасҭ, теҫҫӗ.

Ёлӗк хуђе патне кайсан кӗрӗк арки йӑваласа ларнӑ, халӗ уђрештенийе пырсан кӗрӗк арки йӑваламалла пулаҭ.

## Ҫутҫекси ҫатӑлтаттараҭ.

Йенкасси (Ҫӗрпӳ у.) йалсоветђӗн ҫутӗҫ ҫексийӗ ӗҫсе ӳсӗрӗлсе, лашапа урамтӑрӑх сиккипе ҫӳрет. (Антрейӗв й. сӑмахӗнђен).



— Ей-й! Сирӗлӗр, ухмахсем!.. Ҫутӗҫ ҫексийӗ пыраҭ, пӑрӑнӑр!
— Ӑҫта кайма васкаҭ ку куђҫут? Лаши ђӗлхине кӑларсах ђупаҭ мӗскӗн...
— «Капкӑна» пуђ, ӑҫта кайђђӑр тата...




## Суйлавра.

— Мана йалсовет претçетаттĕлне ан кӳртĕр.
— Ма тата?
— Пĕтĕм йалĕпе епĕ анђах йалкор. Йалсовет çинђен çыраканни никам та пулмĕ.

* * *

— Пурте кивĕ претçетаттĕле претçетаттĕлтен кăларас тесе аллисене тăратнă, есĕ ма тăратмастăн?
— Пултараймастăп, мĕншĕн тесен претçетаттĕл шуйтанĕ ман çинеллех пăхса ларат̆.

(«Çапата»).

## Хăнăхсах çитеймен.

— Çулталăк хушшинђе тирпейлĕх решимĕпе хăнăхса çитрĕни?
— Решимпа хăнăхрăм. Тирпейлĕхĕпе хăнăхаймарăм-ха.

## Çĕнĕ пуçлăх.

— Мĕнле сирĕн çĕнĕ пуçлăх—хайĕн ĕçĕсемпе паллашса çитеймени мĕн?
— Çитеймен çав, мĕншĕн тесен вăл хайĕн тавра хайне çывăх çынсем ларнине вĕреннĕ, çывăхрисене халĕ тупса çитерейменн пулмалла-ха.

(«Пусот̆ор»).

## Палланс.

— Сирĕн отђотра, кăçал сутуилӳрен услам йулнă тенĕ. Усламĕ ăçта тата?
— Усламĕ отђот çырнăшăн тӳленĕ çĕре кайнă.

(Пус—р).

## Пĕрре вĕреннĕскер...

Çитĕннисене вĕрентнĕ çĕрте уђиттĕл вĕренекентсн ыйтат̆:
— Халĕ ĕнтĕ сире «таплитсă умношени» каласа патăм. Калăрха мана: ик хут иккĕ миçе пулат̆? Никам та пĕлмести? Иванов йулташ, есĕ те пĕлместĕни? Есĕ копператтив правленин ђленĕнђе тăратăнçке! Пĕлмеллеçке санăн?
— Еп пĕлетĕп... Пилĕк пулат̆, уђиттĕл йулташ!
— Намăс мари сана? Кунта отђот куртăни мĕн? Отђотра суйеççĕ.

(Ç ă—та).

## Кам ђейерех.

Пĕр хресђенĕн хулара пустав илмелле пулнă.
Кĕрет те вăл макаçăна, кĕлleшме тытăнат̆.
— Мĕн хак?
— Меттăрĕ 4 тенкĕ.
— Хăçан йӳнелет?
— Çитес кунсенђех йӳнелмелле, теççĕ хресђене.
Пурăнсан-пурăнсан çав хресђен каллех пырат̆ хулана. Макаçăн çывăхĕнђен иртсе кайнă ђухне ђӳређе çинђе вывĕскă çакăнса тăнине курат̆. Вывĕски çипе:
«Сукно таврашсен хакне нумай йӳнетнĕ», тенĕ.
— Апла пулсан пăртакçă тăхтамха, —татах йӳнетĕçи тен, тет.
Пăртакçă тăхтасан каллех çав макаçăна пырат̆, каллех çав пустава ыйтат̆.
— Меттăрĕ 8 тенкĕ, тет ăна прикашђăк.
— Мĕнле апла?—тет хресђен,—пĕлтĕртеппе тăват-пилĕк хут ĕнтĕ есĕр тавар хакĕсене йӳнетрĕр, пустав хакĕ икĕ хут ытла хăпарнă?!
Ăна прикашђăк калана:
— Йӳнетесси, ђанах ĕнтĕ йӳнетсех пытăмăр, ун çинђен пĕлтерӳ те çапрăмăр. Анђах çав вăхăтрах пилĕк хутђен хăпартрăмăр. Хăпартни çинђен хăвах пĕлетĕн ĕнтĕ, опйавленисем (пĕлтерӳсем) çапмаççĕ. (Кађоннăй).

## Пуштă йешђĕкĕ.

**Петĕр Е.** — Сирĕн Упа-çырми йалĕнђе йăтăсем çынсене çăпатаран çыр таççĕ-и? Хм-м! Апла еппин!.. Ун çинђен «Капкăнра» çырмастпăр, мĕншĕн тесен пирĕн «Капкăн» йăтăсен капкăнĕ мар, йăтă йеверлĕ çынсен «Капкăнĕ» Йăтăсен капкăнне пĕлтер ун çинђен.

**Ырçана.** Йакур Павăлĕ сторăшăнне пашалу илсе тула тухса çыни çинђен сторăшне хăйне кала. Пирĕн ĕç çук пашалусемпе.

**Краснова.** Вуламалли çуртăн сĕтелли çине хăпарса кайни çинђен çырса «волоккиттă» тейекен усала савăнтарас мар, терĕмĕр. Хăварах сĕтел çинђен хуса йама пултараттăр.

## Репус.







## „Капкăн“ çырăвĕ.

Сехет тăрăх еп ўсетĕп,
Минутпала вăй илетĕп,
Ох, пурăнăç!

Еп çурални ик çул çитет,
Ман менелнĕк вĕçсе килет.
Ех, савăнăç!

Менелнĕке пурте килĕр,
Мана савса укçа пиллĕр,
Хаклă йулташсем!

Пайанлăха сывă пулăр,
„Мана“ ђасрах илсе вулăр,
С авнă тăвансем!




## Хӳре, хӳре!.. Хӑҫан ҫак хӳре кӗскелӗши?

**Ђӑваш матки:** Хӑта, миҫе метр пустав кирлӗ пуђ ҫак ађана шалавар ҫӗлетме?

**Хресђен:** Мӗнле калас? Ђерет нумайҫке... Сире ђерет ҫитиђђен тем пысӑккӗш те ҫитӗнсе кайӗ ађу. Миҫе меттӑрне халех кӑтартса пама хӗн.





Ответ. редактор **А. Золотов**.

Чувашлит № 1541 Чебоксары, тип. „Чувашская Книга“.